# АЙХИ



## Сăвăсемпе поэмăсем

Геннадий Айхи

# Сăвăсемпе поэмăсем

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ

Геннадий АЙ

# Сăвăсемпе поэмăсем



# ХИ

✦

Паллах, халь Шупашкар ҫаплах шавлать,
Ҫаплах ялтраҫҫӗ Атӑл хумӗсем.
Урамсенче ҫӗршер хунар ҫунать,
Ҫуртсем ҫине ӳкеҫҫӗ шевлисем.

Ӑҫта эсир, телей сунан кунсем,
Мӗскершӗн ӑрататӑр чӗрене?
Ӑҫта эсир?.. Халь манӑн шухӑшсем
Пурте вӗҫеҫҫӗ Шупашкар енне...

1948

✦

*И. Ж.*

Ун тараватлӑ чӗрине
Мӗн-ма ҫаплах хурлантаратӑр?
Сирте тӗрек шыранине,
Тен, вӑйсӑрлӑх тесе шутлатӑр?

Ах, амантма эсир — хастар!
Анчах туса тус пек курсассӑн,
Сӑпайлӑхӗ ун — шиклӗх мар,
Чун вӑйӗ тейӗттӗр, туйсассӑн.

1949